Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

39 (7464) № ✻ Шăмат кун, 2007 çулхи майăн (çу) 12-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Майăн 15-мĕшĕ – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ

**ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!**

Сире чи ырă уявсенчен пĕринпе – Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çемье вăл – ăш пиллĕх, юрату, шанăçпа чăнлăх вучахĕ. Çемьере килĕшӳпе çураçу, ыр кăмăллăхпа пĕр-пĕрне ăнланни пулсан çын телейлĕ. Ашшĕ-амăшĕ тăрăшнипе ачасем пĕрремĕш утăмсем тăваççĕ, тĕнчене курма вĕренеççĕ, пулас пурнăç урокне илеççĕ, ыр кăмăллăх, ĕçченлĕх, патриотизм, ответлăх тата тĕрĕслĕх туйăмĕсемпе воспитани илеççĕ.

Йĕркеллĕ çемье вăл цивилизациллĕ обществăн тата çирĕп çĕршывăн никĕсĕ пулса тăрать. Чăваш Республикинче ача амăшĕпе ачашăн тăрăшасси, çемьесене пулăшу парасси чи пĕрремĕш вырăнта тарать. Çемьесене социаллă пулăшу парасси çуллен ӳссе пырать. Сывлăха сыхлас, вĕрентӳ, ял хуçалăхĕ, строительство енĕпе пысăк пĕлтерĕшлĕ проектсем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. «Дети Чувашии» программа та пурнăçланать. Ачасемшĕн ача пособийĕсем илме тивĕç çемьесен хисепне ӳстернĕ. Ачасене пур енлĕн аталанма, вĕсен прависене хӳтĕлеме, çемьесене пысăкрах, обществăна сывлăхлă, çĕршыва вăйлă пулма майсем туса пама тăрăшатпăр.

Раççей Президенчĕ 2008 çула Çемье çулталăкĕ тесе палăртрĕ. Çемьесен ĕмĕрхи хаклăхĕсемпе традицийĕсем кашни çыннăн тĕп пуянлăхĕ пулса тăччăр.

Сире тата сирĕн çемьесене çирĕп сывлăх, ăнăçу, телей сунатăп, сирĕн çемьесенче яланах юратупа ăнланулăх хуçаланччăр. Пĕр-пĕрне хисеплĕр!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.**

**ХИСЕПЛĔ ЕНТЕШСЕМ!**

Сире çывхарса килекен Пĕтĕм тĕнчери çемье кунĕ ячĕпе чунчĕререн саламлатăп.

Çемье кашни çыннăн пурнăçĕнче тĕп вырăн йышăнать. Ача мĕнле çын пулса ӳсесси, унăн малашнехи пурнăçĕ епле пулассиси йăлтах çемьерен пуçланать. Кунтах вăл ăс-хакăлпа нравственность тĕлĕшĕнчен пур енлĕн аталанса ӳсет, ырăпа усала уйăрма хăнăхать, ырă ĕçсем тума вĕренет. Çемьери юратупа килĕшӳ ачасене пурнăç çулĕпе тĕрĕс утма пулăшаççĕ. Вĕсем ĕçе юратма вĕренесси, ватăсене сума сăвасси, яваплăха туйса ӳсесси, сывă пурнăç йĕркине тытса пырасси – мĕн пур ырă енсем йăлтах çемьерен пуçланаççĕ. Чуна йывăр чухне сана кунта ăнланаççĕ, пулăшаççĕ, каçараççĕ. Туслă çемьере йывăрлăха чăтса ирттерме, çĕнтерме те çăмăлтарах. Килте сана яланах кĕтеççĕ. Çакăнтан хакли мĕн пултăр çыншăн?

Çемье вăл – кашни çыншăн телей. Ку вара пирĕнтен хамăртанах килет. Килте пĕр-пĕрне ăнланнине, каçарма пĕлнине нимĕн те çитмест. Çирĕп çемьере ашшĕ-амăшĕн ăшшине, юратăвне туйса ӳсекен ачасем нимĕнле йывăрлăх умĕнче те çухалса каймаççĕ, ырă кăмăллă пулаççĕ, пурнăçра хăйсен вырăнне тупаççĕ. Çавăнпа та çĕршыв малашлăхĕ те çемьепе уйрăлми тачă çыхăннă. Ачаллă çемьесене пулăшас тĕллевпе кăçал пурнăçа кĕртнĕ çĕнĕлĕхсем те Раççей, Чăваш Республикин Правительстви-семшĕн çемьесене пулăшасси малти вырăнта пулнине кăтартса параççĕ.

Сире пурне те хăвăрăн çемье телейĕшĕн хăвăртан килнине пĕтĕмпех тума çирĕп сывлăх, иксĕлми вăй-хал сунатăп. Эсир ачăрсемшĕн ырă тĕслĕх пуласса та шанатăп. Районти кашни килте юрату, килĕшӳпе тату пурнăç, телей хуçаланччăр.

**Район пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.**

## Паян – Медицина сестрисен кунĕ



*Светлана Васильевна Белова – Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ больницăри массажистка. Çăмăл ĕç мар вăл, вăй хурса тимлемелле. Стационарти кашни уйрăмрах пур чирлисем унăн, вĕсем патне те вăхăтра çитет Светлана. Çамрăк пулсан та аларан ĕç кайтăр темест вăл, ăна тĕплĕ тăвать. Сывалнисем калана тав сăмахĕсем вара ăна тата тăрăшарах ĕçлеме хавхалантараççĕ.*

**О. СУВОРОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Районта Çĕнтерӳ кунне уявлани

# Уяв тулли кăмăлпа иртрĕ



Майăн 9-мĕшĕнче Муркашсем те Аслă Çĕнтерӳ кунне чыслă уявларĕç. 62 çул иртрĕ унтанпа, анчах çав çулсенче Тăван çĕршывăмăр тӳссе ирттернĕ йывăрлăхсем манăçа тухмаççĕ. Кашни çемьене, кашни çынна пырса тивнĕ-çке вăрçă инкекĕ. Муркаш районĕнчен нимĕç фашизмĕпе кĕрешме кайнă пиншер çынран çурри ытла вăрçă хирĕнчен таврăнайман. Муркаш енчен фронта кайнисем те çĕршыв умĕнчи парăма чыслă пурнăçланă. Кашни паттăра ятран асăнса та çитерееc çук, анчах вĕсем кашниех тĕнчере мир пултăр тесе атакăна çĕкленнĕ, тăхлан çумăр витĕр Çĕнтерĕве çывхартнă.

Çĕнтерӳ кунне халалласа ирттернĕ митинга район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. Иванов уçрĕ. Вăл хамăр ентешсен Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи паттăрлăхĕ çинче тĕплĕн чарăнса тăчĕ.

– Эпир паян мирлĕ пурнăçра пурăнни – миллионшар совет çыннин вăй-халĕ, вăхăтсăр татăлнă пурнăçĕ. Çавăнпа та аслă ăрусем умĕнче эпир ĕмĕрлĕх парăмра. Вĕсем юн юхтарса çĕнсе илнĕ Çĕнтерĕве пирĕн паян тухăçлă ĕçпе хуравламалла, вĕсен ӳсĕмне малалла аталантарса пымалла, – терĕ Юрий Александрович.

Пурнăç малалла шăвать, ветерансен речĕ те сахалланса пырать. Акă Муркаш ял тăрăхĕнчен фронта 468 çын кайнă пулсан, Çĕнтерӳпе таврăннисем – 235 çын. Паян вĕсенчен 13-шĕ çеç пурăнаççĕ тата виçĕ салтак арăмĕ. Ветерансен речĕ чакать тенĕрен, пĕлтĕр вĕсем районта 209 çын пулнă пулсан, кăçалхи Çĕнтерӳ кунне 179-ăн çеç кĕтсе илчĕç.

Çĕнтерӳ уявĕ ячĕпе çак кун район çыннисене Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В. Тихонов, Чăваш Республикин Федераллă казначейство ертӳçи И. Клюкова, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В. Данилов, районти çар комиссарĕн ĕçĕсене туса пыракан Д. Захаров, тыл ĕçченĕ тата Социализмла Ĕç Геройĕ О. Федорова, район сучĕн председателĕ Э. Тарасова, Раççейри пенсионерсен союзĕн Муркаш районĕнчи канашĕн председателĕ В. Краснов саламларĕç.

Митинг хыççăн унта пухăннисем район центрĕнчи Çĕнтерӳ паркĕнчи Çĕнтерӳçĕ Салтак палăкĕ умне чечек кăшăлĕсем хучĕç **(сăн ӳкерчĕкре).**

**А. БЕЛОВ.**

## Çĕнтерӳ кунне халалласа

# «Тăван çĕршыв ывăлĕсем» – Муркашра

Майăн 8-мĕшĕнче Мускав хулинчи «Тăван çĕршыв ывăлĕсем» çар организацийĕн представителĕсем пирĕн районта пулнă. Вĕсен шутĕнче Раççей Шалти ĕçсен министерствин шалти тĕп çар командованийĕн полковникĕ Анатолий Дмитриевич Иванов, тĕп клиника çар госпиталĕн медицина службин подполковникĕ Сергей Андреевич Иванов, федераллă хăрушсăрлăх службин Мускаври пограничниксен институчĕн 3-мĕш курс курсанчĕ Кристина Вячеславовна Киршева. Пурте вĕсем Муркаш районĕн çыннисем.

Хăнасем Муркаш лицейĕнче вĕренекенсемпе тĕл пулнă, тĕрлĕ ыйтусем çине хуравланă.

Кунпа пĕрлех çар представителĕсем Турай, Калайкасси шкулĕсенче пулнă, митинга хутшăннă, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕсене саламланă, вăрçăра вилнĕ салтаксене асăнса лартнă палăк умне чечек кăшăлĕсем хунă.

Хăнасем Москакассинчи тĕслĕх библиотекăна уçнă çĕрте те пулнă.

**Хамăр инф.**

## Пĕрлехи информаци кунĕ

# Ял çыннисемпе тĕл пулма

Майăн 16-мĕшĕнче районта пĕрлехи информаци кунĕ иртет. Район çыннисемпе тĕл пулма, вĕсене хумхантаракан ыйтусем çине хуравлама района ЧР Патшалăх ветеринари службин пуçлăхĕ В.К. Тихонов, РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн управляющийĕ Р.А. Кондратьева, РФ Юстици министерствин суд экспертизин республикăри лабораторийĕн пуçлăхĕ Л.П. Морозов килеççĕ. Вĕсем ушкăнсем çине пайланса «Оринино», «Восток», Е. Андреев яч. хис. хуçалăхсенче, Орининти, Атапайри, Москакассинчи шкулсенче, Москакассинчи пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕнче, «Колокольчик» ача садĕнче пулса кураççĕ.

**Хамăр инф.**

## Строительство ыйтăвĕсемпе

# Тĕллевсем пурнăçланмалла

***Çут çантпалăк чĕрĕлсе вăй илсе пырать. Çĕршыв типнĕ май çурт-йĕр, çулсем тăвас ĕçсем пысăк хăвăртлăхпа кайма пуçлаççĕ. Кăçалхи 4 уйăх та вĕçленчĕ ĕнтĕ. Ку тĕлĕшпе ĕçсем районта мĕнле пыраççĕ? Тата малашнехи ĕмĕт-тĕллевсем еплерех? Çакăн пирки каласа пама ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕнчен – капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçинчен В.Г. НИКИТИНРАН.***

**– Владимир Германович, кашни çыншăнах çурт-йĕр пысăк пĕлтерĕшлĕ. Кăçал пирĕн районта миçе çемье çĕн пӳрт ĕçки тăвасси паянах палăрать ĕнтĕ. Мĕн каланă пулăттăр ку тĕлĕшпе?**

– Кăçал пирĕн пĕтĕмпе 30900 тăваткал метр чухлĕ тумалла çурт-йĕре. Ку вăл ялсенче çынсем тăвакан уйрăм çуртсемпе пĕрле.

Хальхи вăхăтра вара Москакассинчи 36 хваттерлĕ 3 хутлă çуртра ĕçсем малалла пыраççĕ. Хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийĕн строителĕсем вăй хураççĕ унта. Муркашри 40 хваттерлĕ çурта вара кăçал июнь уйăхĕччен хута ярасшăн. Çĕр-шыв типсен, Парк урамĕнчех çакнашкал тепĕр 2 подъездлă çурт никĕсне яма пуçламалла. 40 хваттерлĕ пулĕ вăл та.

**– Çулсеренех пирĕн район çынсене хваттерсемпе тивĕçтернĕ чух, ялта çурт-йĕр çавăрма тĕрлĕ программăсемпе ĕçлесе пырать. Кăçал ку енĕпе ĕçсем епле пыраççĕ?**

– Çамрăк çемьесене кăçал "Çурт-йĕр" программăпа килĕшӳллĕн пулăшатпăр çурт-йĕрлĕ пулма. 40 процент таран паракан субсидие 30 çула çитмен çамрăк мăшăрсем тивĕçеççĕ.

Тепĕр программа вара – "Ялсене 2010 çулччен социаллă аталантарасси". Асăннă программа хăй икĕ енĕпе ĕçлет. Пĕрремĕшĕнчен, унпа 30 çула çитмен çамрăк специалистсем усă кураççĕ. Тепĕр енчен вара ялта пурăнакан 30 çултан иртнĕ граждансем валли вăл.

Çавăн пекех район бюджетĕнчен çынсене çурт-йĕр çавăрма пулăшма укçа-тенкĕ пăхса хăварнă. Çак 30 процентлă субсиди валли кăçал 3 миллион та 190 пин тенкĕ уйăрса хăварнă.

Ипотека кредитне илекенсем те пур районта. Асăнмалла, вăл 6 процентлă.

**– Çул-йĕр тăвас ыйту та районта нихăçан та кайри вырăнта пулман. Иртнĕ çул ку лав та вырăнтан пысăк хăвăртлăхпах тапранчĕ.**

– Пĕтĕмпе пĕлтĕр 9 ял патне асфальт çул туса пĕтертĕмĕр. Кăçал та палăрăмлă утăмсем пур ĕнтĕ ку енĕпе те. Çак кунсенче Пиккикассине çити асфальт сарас ĕç вĕçленчĕ. "Волгодорстрой" строителĕсем ĕçлерĕç унта. Пурĕ 1 километр та 100 метр чухлĕ. Çавăн пекех Мăрсак патне каякан çула вак чул сараççĕ. Пурĕ 800 метр чухлĕ. Пушкар ялĕ патне çити 1,8 километр чухлĕ асфальт çул сараççĕ.

Çул тăвасси çитес вăхăтра тата темиçе объектра пуçланмалла. Тĕслĕхрен, Опрыскьялне çити 2,6 километр, Платкассине 2,3 километр чухлĕ пурнăçламалла ку ĕçе. Пĕтĕмпе вара кăçал 23 ял патне асфальт çул сарма тĕллев лартнă. Пĕчĕкрех ялсем патне çити çула вак чулпа витетпĕр.

Çул тунипе çеç ĕç вĕçленмелле мар. Ăна йĕркеллĕ пăхса тăмалла. Ку ыйту та яланах малти планра. Кĕçех Тойкилтĕрен Кĕртекассине (900 метр), "Волга" – Вăрмой çула (900 метр) юсас ĕç пуçланмалла. Çавăн пекех Мăн Хураçкана каякан çула та (3 километр) кăçалах юсамалла. Çак 3 объекта юсама та район бюджетĕнчен укçа-тенкĕ уйăраççĕ.

Район шайĕнчи çулсем çеç мар, республика шайĕнчи çулсем çинче те туса ирттермелле ку ĕçе. Çулталăк вĕçлениччен Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск, Муркаш – Турай – "Сура", "Волга" - "Гигант" – Шашкар пристанĕ çулсем çинче те юсав ĕçĕсене тума палăртнă.

**– Владимир Германович, район центрĕн варринче нумай çулсем ларакан Культура çурчĕн "сухалне" те строительсем хырса пăрахрĕç. Унăн малашĕ пирки хаçат вулакансене пĕлтерсен аванччĕ.**

– Кунта малашне физкультурăпа спорт комплексĕ пулĕ. Хальхи вăхăтра унта хуçалăхсем хушшинчи "Моргаушская" строительство организацийĕн строителĕсем ĕçлеççĕ: перегородкăсем, штукатурка тăваççĕ, хушма чӳречесем касаççĕ, бассейн валли аялтан вырăн чавса хатĕрлеççĕ тата ытти те. Ку объекта çитес çулта туса пĕтерме палăртнă.

**– Тавах, Владимир Германович, калаçушăн.**

**Л. ПАВЛОВА калаçнă.**

## Ыйтусем кĕтетпĕр

# Тирпей-илем хамăршăнах

### *Вулакансен ыйтăвĕсене В.Г. Никитин хуравлать*

Тавралăха тирпей-илем кĕртесси – паянхи кун йĕркинчи çивĕч ыйту. Редакцие вулакансем ырă тĕслĕхсем пирки те, çитменлĕхсем çинчен те пĕлтерсех тăраççĕ.

Вулакансен ыйтăвĕсене хуравлама район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн ертӳçи В.Г. Никитин килĕшрĕ. Апла пулсан, хаклă вулакансем, сирĕнтен çырусем кĕтетпĕр. Ĕç вăхăтĕнче 2-12-82 номерлĕ телефонпа шăнкăравлама юрать.

Ыйтусене çитес кĕçнерни кунччен йышăнатпăр. Хуравсене çывăх вăхăтрах район хаçатĕнче пичетлетпĕр.

**РАЙХАÇАТ РЕДАКЦИЙĔ.**